# Паян — Чăваш чĕлхи кунĕ

чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

76 /26482/ № Эрне кун, 2014, ака (апрель), 25 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Саламлатăп

**Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!**
**Сире Чăваш чĕлхи кунĕпе саламлатăп!**

Тăван чĕлхе – кашни çыннăн чи пысăк пуянлăхĕ, юратнă аннен сăпка юрриĕ, мăн асатте-асаннен иксĕлми ăс-хакăлĕ.

Чăваш Ен влаçĕ наци чĕлхипе культурине аталантарма, тĕрев пама май паракан патшалăх политикине тытса пырать. "Тăван радио" янăраса кайрĕ. Наци радиовĕ аудиоархивне пуянлатсах пырать. Наци телекуравĕн чăваш чĕлхипе паллаштаракан "Илемпи урокĕсем" кăларăм хăйĕн куракансене тупрĕ.

2013 çулта 121,7 пин тиражпа 49 тĕрлĕ чăвашла кĕнеке кун çути курчĕ. Вĕсен шутĕнче – "Чăваш поэзийĕн антологийĕ", "Чăваш чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекин" иккĕмĕш томĕ, "Чи хитре чĕлхе". Ачасемпе çамрăксем валли çырнă кĕнекесен ал çырăвĕсен авторĕсене грантсемпе хавхалантараççĕ.

Чăвашсен паллă çутта кăларуçи И.Я.Яковлев çапла çырнă: "Халăх шухăшлавĕ тата тавра курăмĕ тăван чĕлхере аван палăрать. Çавăнпах тăван чĕлхесĕр пĕлӳ çук".

Чăваш Енре республика территорийĕнче тĕпленнĕ мĕн пур наци чĕлхипе культурине хаклаççĕ, хисеплеççĕ. Çакă тăнăçлăх тата килĕшӳ никĕсĕ пулса тăрать те ĕнтĕ.

Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, çурхи кăмăлтуйăм, телей, ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

*Акци*

## Чĕлхене ытларах юратма пулăшать

***Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче, Чăваш чĕлхи кунĕнче, «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» иртет. Ăна кăçалхипе иккĕмĕш хут йĕркелеççĕ. Çак акци çинчен РФ Патшалăх Думин Вĕренӳ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕ, Чăваш Ен интересĕсене хӳтĕлекен депутат Алена АРШИНОВА мĕн шухăшлать-ши? Акă мĕн пĕлтерчĕ вăл пире телефонпа:***

«Ку акци мана питĕ килĕшет, вăл чăнласах та пурнăçа кĕни пушшех савăнтарать. Акцие йĕркелесе ирттерекенсене – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтне, Чăваш Республикин вĕренӳ институтне, «Хыпар» хаçата, Чăваш наци телерадиокомпанине, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУпа И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУна – ырлас килет. Пĕтĕм чăваш диктанчĕ – çын хăй чăвашла çырма пĕлнине тĕрĕслемелли лайăх мел. Вăл ытти регионшăн та ырă тĕслĕх пуласса шанатăп. Ку акцие çамрăксем хастар хутшăнасса ĕненетĕп. Диктанта ятарласа уйăрнă вырăнта çеç мар – килте те, ĕçре те, шкулта та çырма май пурри аван: Чăваш наци радионе е телекуравне ямалла та ĕçе пуçăнмалла... Çавăнпа республика тулашĕнче тĕпленнĕ чăвашсем те айккинче тăрса юлмĕç пулĕ тетĕп.

Пĕтĕм чăваш диктантне Чăваш чĕлхи кунĕнче – Иван Яковлев çуралнă кун – çырни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Иван Яковлевич халăха çутта кăларас тесе калама çук пысăк ĕç тунă-çке. Паянхи пек акцисене пулах эпир историри паллă пулăмсене тепĕр хут аса илетпĕр, чĕлхене тата тарăнрах вĕренме ăнтăлатпăр. Çакнашкал мероприятисем ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшне тăван чĕлхене юратма тата хăйсен тымарĕсене асра тытма пулăшаççĕ – ку вара питĕ пĕлтерĕшлĕ».

Алена Игоревнăн Пĕтĕм чăваш диктантне хутшăнас кăмăлĕ пурри-çуккипе те кăсăклантăмăр: вăл чăвашла вĕренме пуçланине чылайăшĕ пĕлет-çке. «Акцие хутшăнасси-хутшăнаймассине хальлĕхе татсах калаймастăп», – пулчĕ хурав. РФ Патшалăх Думин депутачĕ «çук» тесе хирĕçлеменрен вăл Пĕтĕм чăваш диктантне çыратех пулĕ тесе шанатпăр.

**И.КЛЕМЕНТЬЕВА**

# Кам вăл пирĕншĕн Яковлев?



Г.ВЕРБЛЮДОВ архивĕнчи сăн ӳкерчĕк

***Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ. Мĕнпе паллă вăл чăваш тĕнчишĕн? Шăпах çак кун, 166 çул каялла, Мăн кун эрнинче, Иван Яковлев çут тĕнчене килнĕ. Виççĕмĕш куннех амăшĕсĕр тăрса юлнă, ашшĕ камне пĕлмесĕр çитĕнекен ача Пахомов чăваш çемйинче кĕтес тупнă. Çичĕ-сакăр çултах чикан майри унăн малашлăхĕ пысăк, вăл паллă çын пуласса пĕлтернĕ. Ун чухне вырăсла пĕр сăмах та чухламан ача тĕлĕкĕнче те ĕмĕтленме пултарайман пулĕ ун пирки. Вăхăт иртнĕ, чикан майрин сăмахĕсем чăна килнĕ. Çав çын пĕтĕм чăваш халăхĕн, ун çеç те мар, Аслă вĕрентӳçи пулса тăнă. Вăл – пирĕн мухтавлă Иван Яковлевич Яковлев, поэт сăмахĕпе – «чăвашăн чăн-чăн Прометейĕ».***

«Чăваш Прометейĕ» тĕнчене килнĕ куна хисеплесе Чăваш Республикин Аслă Канашĕн Президиумĕ 1992 çулхи ака уйăхĕн 9-мĕшĕнче Аслă вĕрентӳçĕн çуралнă кунĕнче Чăваш чĕлхи кунне уявласси пирки йышăну кăларнă. Çакă ахальтен мар. Иван Яковлевичăн пĕтĕм пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ тăван халăхĕпе, ăна çутта кăларассипе çыхăннă.

Çак кунсенче пĕтĕм чăваш тĕнчи Яковлев сывлăшĕпе сывлать, унăн кун-çулĕпе пурăнать, ăсне тăнлать тейĕн. Чăваш тымар янă кирек хăш кĕтесре те Чăваш чĕлхи кунĕсем иртеççĕ. Акă ака уйăхĕн 23-мĕшĕнче ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов ертсе пыракан сумлă ушкăн Иван Яковлевăн тăван ялне – Тутарстанри Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушкине тухса кайрĕ. Вырăнта – Яковлев палăкĕ умĕнче – савăнăçлă митинг иртнĕ, чăвашлăх хастарĕсем умра тăракан тĕллевсене сӳтсе явнă. Палăртса хăвармалла: Яковлевăн Кăнна Кушкинчи палăкне ултă çул каялла шăпах Николай Угаслов пулăшнипе уçнă. Чăваш Ен делегацийĕ малалла Пушкăртстана çул тытрĕç, унта та чăваш ĕçĕпе çыхăннă пысăк мероприятисене хутшăнчĕç.

Шупашкарта е Хусанта, Самарта е Нарвăра, Мускавра е Тюменьре пулĕç вĕсем. Чи пĕлтерĕшли – вĕсем ячĕшĕн çеç пулманни. Хамăрăн иртнĕ чăнлăха чунпа-чĕрепе туйса илсе паянхи кун пĕлтерĕшĕпе шайлаштарса хакласчĕ. Пуç ватмалли пайтах, чăтса ирттернĕ мăшкăлĕ те çук мар. Чĕлхене хĕсĕрлени те пулнă. Чăваш вырăса е тата ăнланмалла мар «совет» халăхне çаврăнас патнех çитнĕччĕ. Çак инкеке чăтса ирттернĕ хыççăн нихăçан та урăх унашкал йăнăш тăвас марччĕ.

Чăваш чăннипех чăтăмлă халăх çав. Хăйĕн пин-пин çулхи кун-çулĕнче вăл тĕнчери 6 пине яхăн этника ушкăнĕнче çухалса каймарĕ: йышпа 1 миллион ытла çын шутланакан халăхсен хушшинче ик çĕрмĕш вырăнта. Эпир – вак халăх мар. Раççейре те хальлĕхе кайрисен йышĕнче тăмастпăр. Çапах лăпланмалли сăлтав-и çакă? Çук паллах. Чĕлхемĕр пирки çулталăкра пĕр хут кăна аса илме пуçласан чĕлхесĕр халăх пулса юласси те инçех мар. Çавăнпа та юнпа çеç мар, чунпа та яланах чăваш пулар, атте-анне чĕлхине хисеплер.

Студент чухне Мускаври Ваганьково масарĕнче пулнăччĕ, И.Я.Яковлев вил тăпри çине çитсе курнăччĕ. Юхăннăччĕ вăл. Çуралнă кунĕнче ун патне тăванĕсемсĕр пуçне пыраканĕ те пулман ахăр. Паян вара Мускав чăвашĕсен хастарĕсем çеç мар, пĕтĕм чăваш тĕнчи ăна пуç таять.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче те пулнăччĕ. Çĕр çул ытла каялла Аслă вĕрентӳçĕ уçнă чиркӳре Илле атте чăваш ĕçне, Яковлев халалне пурнăçа кĕртме пил панăччĕ. Чăваш шкулĕнчи хĕрсен уйрăмĕн çуртĕнче пурăннă Яковлевсем. Патриархăмăр çӳренĕ урай тăрăх утма, вăл пăхнă чӳречерен тинкерме май килни те телей. Кăнна Кушки тата... Чăваш халăхĕн вышкайсăр пĕлтерĕшлĕ кун-çул парнеленĕ пĕчĕк, хăй вăхăтĕнче «малашлăхсăр ял» ята тивĕçнĕ кĕтес. Çывăх вăхăтра çак «куршанак» ун çумне каллех çыпçăнас хăрушлăх пур. Ялти шкула хупас текен сассем хура тухнă. Иртнĕ çул унта пулнăччĕ. Ун чухне хăй вăхăтĕнче Яковлев уçнă шкула 26 ача çӳретчĕ. Халĕ тата сахалланса юлнă пулĕ çав.

Чăваш чĕлхин 21-мĕш ĕмĕрти пĕлтерĕшĕ пирки калаçнă чух çак пулăмсене шута хумаллах: чĕлхе кун-çулĕ вăрăм пуласси унпа общество-политика тытăмĕнче, кил, вĕренӳ шайĕнче мĕнле усă курнинчен нумай килет. Чăваш чĕлхи республикăра патшалăх чĕлхи пулса тăнă пулсан та çивĕч ыйту татăлман-ха.

Пĕр-пĕринпе сапăр пулма, çукшăн-пуршăн чашкăрса çӳресрен, харкашасран аякка тăма сĕннĕ Çутта кăларуçă. «Эпĕ туса пĕтереймен ĕçсене эсир туса пĕтерĕр», – тенĕ вăл.

Калас тенине каласа çитерейменĕм пулĕ, шухăшсем те сапаланчăк килчĕç ахăртнех. Иван Яковлевич Яковлев пирки хумханмасăр, кĕскен те татăклăн калама, пĕтĕмлетӳсем тума çук. Вăл тăван халăхĕшĕн тунă ĕçĕсем чикĕсĕр пысăк, утса тухнă кунçулĕ пархатарлă. Халăхăмăр пекех мăнаçлă вăл, чăн-чăн Улăпăмăр. Халалĕсем, пехилĕсем вилĕмсĕр. Пӳрт лартма йывăр мар, никĕсне хывма йывăр теççĕ халăхра. Никĕс вара пирĕн пур. Ăна И.Я.Яковлев хывнă. Пирĕн унăн ĕçне малалла тăсмалла. Çапла пултăрччĕ.

**Надежда СМИРНОВА**

## Михаил Игнатьев интервью панă

***Ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш наци радиовĕн тата «Тăван радио» студийĕсенче пулнă.***

Республика Пуçлăхĕ журналистсен ĕç условийĕсемпе паллашнă, радиостанцисен ертӳлĕхĕпе тата пултарулăх коллективĕсемпе калаçнă, вĕсен сĕнĕвĕсемпе ыйтăвĕсене итленĕ. Калаçăва пĕтĕмлетнĕ май должноçри яваплă çынсене хушма пӳлĕмсен, пултарулăх процесне пахалăхлăрах йĕркелемешкĕн кирлисен, ыйтăвне кĕске вăхăтра татса пама хушнă.

Михаил Игнатьев çавăн пекех Олег Прокопьев тата Юлия Стройкова журналистсене икĕ сехетлĕх интервью панă. Ăна Чăваш наци радиовĕпе ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче 19 сехет те 10 минутра трансляцилеççĕ. Ку интервьюна ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче 10 сехет те 10 минутра тепĕр хут итлеме пулать.

**КУН хыççăн КУН**

☎ 56-04-26

## Сывлăх кунĕ йыхравлать



***Шăмат кун, ака уйăхĕн 26-мĕшĕнче, Чăваш Енре сывлăхпа спорт кунĕ иртĕ. Мероприяти Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уйăх каялла алă пуснă указпа килĕшӳллĕн пурнăçланать. Палăртнă кун çынсен кашни уйăхра спорт керменĕсене тӳлевсĕр çӳреме ирĕк пур.***

Бассейнра шыва кĕме кăмăл пур-и, тренажер залĕнче вăй-хала çирĕплетес тетĕн-и, конькипе ярăнма юрататăн-и – кашни хăй суйласа илет. Çав кунах спортсменсем тĕрлĕ ăмăртура вăй виçĕç, футбол уйĕсенче турнирсем иртĕç. Чылай район-хулара пурăнакансем Чăваш Енри паллă спортсменсемпе пĕрле зарядкăна тăрĕç, вĕсемех ачасене ăсталăх сехечĕсенче çитĕнӳ вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарĕç. Спорт лапамĕсемпе стадионсенче вĕтĕр-шакăрăн хаваслă стартсенче тупăшма май пулĕ.

Акцин тĕп тĕллевĕ – çынсене спортпа туслаштарасси тата сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарасси. ЧР Физкультурăпа спорт министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – иртнĕ мероприятие сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан 340 пине яхăн çын хутшăннă, çав кун республикăра спортăн 4500 объекчĕ – спортзалсем, стадионсем, бассейнсем, хоккей лапамĕсем, тренажерпа фитнес залĕсем – ĕçленĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## Канашсем ал шăллисем тĕрленĕ

***Чăваш Ене мĕн авалтан çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ теççĕ. Ĕлĕкрен чăваш çемйисенче хĕр пĕрчисене тĕрĕ тĕрлеме вĕрентнĕ. Маçтăрсем хăйсен ăсталăхне çамрăксене кăтартнă. Çапла майпа хитре çак искусство паянхи кунччenех упраннă.***

Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа чăваш наци культурине хисеплеме хăнăхтарас, чăваш йăли-йĕркине упрас тĕллевпе Канаш хулинче «Çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕнче» конкурс йĕркеленĕ. Ăна Культура çулталăкне тата Чăваш чĕлхи эрнине халалланă. Конкурс условийĕпе килĕшӳллĕн ăстасем тĕрленĕ ал шăллисене Канаш хула администрацийĕн вĕренӳ тата çамрăксен пайне илсе килнĕ. Алă ăстисене хальхинче хăнасене кĕтсе илмелли ал шăллисем тĕрлеме сĕннĕ. Асăннă конкурса Канашри пур шкул та хутшăннă. Çак кунсенче жюри ĕçсене пăхса тухнă, вĕсене пысăк хак панă. Çĕнтерӳçĕсене вара паян, Чăваш чĕлхи кунĕнче чыслĕç.

**А.ГРОМОВА.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ВĂРМАНТА ПУШАР АН АЛХАСТĂР

**ЧР Министрсен Кабинечĕн ака уйăхĕн 9-мĕшĕнче иртнĕ ларăвĕнче вăрман пушарĕсене пула шар курма пултаракан ял-поселокăн переченьне çирĕплетрĕç. Ку списока 16 ял, сад юлташлăхĕсем, ача-пăча сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсем тата экономика объекчĕсем кĕреççĕ. Шăмăршă районĕнче çакнашкал 7 ял вырнаçнă, Вăрнарпа Йĕпреç тăрăхĕсенче – 2-шер, Улатăр, Патăрьел, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав районĕсенче – 1-ер. Республикăри ГКЧС председателĕ Вениамин Петров каланă тăрăх – ял-поселок лăсăллă /хутăш/ вăрман çумĕнчех вырнаçнă пулсан е унăн территорийĕнче вăрман лаптăкĕ пур тăк вăл пушара пула шар курма пултараканнисен шутне кĕрет. Списокри кашни объекта муниципалитетсенчи чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен комиссисенче çирĕплетнĕ. Çакнашкал ял-поселокăн паспортне хатĕрлемелле, ку ĕçе пушар тухас хăрушлăх ӳсекен тапхăр умĕн туса ĕлкĕрмелле.**

**Асăннă перечене кĕртнĕ ял-хулара пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене, РФ саккунĕсемпе çирĕплетнисене, уйрăмах пăхăнмалла. Вĕсен тата вăрман хушшинче вут-çулăма хирĕçле чикĕ пултăр тесе çĕре палăртнă сарлакăш чухлĕ сухаласа тухмалла. Территорие хăвăрт çунакан материалсенчен, çӳп-çапран, ӳкнĕ çулçăсенчен, типнĕ курăкран тасатсах тăмалла. Халăха инкек пирки пĕлтермелли хатĕр тата телефон çыхăнăвĕ пулмалла. Пушар гидранчĕсене, юхан шывсемпе кӳлĕсене талăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те тӳрех тупма май килтĕр, техника вĕсем патне шыв илмешкĕн çуллапа хĕлле те, кĕркуннепе çуркунне те чăрмавсăрах пыма пултартăр тесе мерăсем йышăнмалла. Вăрман пушарĕсене сӳнтерме явăçтаракан ирĕклĕ пушар дружинисене вутпа пуçламăш тапхăрта кĕрешмелли хатĕрсемпе тивĕçтермелле.**

**Паллах, уçланкăсенче çӳп-çап çунтармалла мар, пĕлтĕрхи типнĕ курăка та чĕртсе яма юрамасть. Çапла хăтланни вăрманта çеç мар, ытти çĕрте те пысăк инкек патне илсе çитерме пултарать. Акă иртнĕ канмалли кунсенче, ака уйăхĕн 19-20-мĕшĕсенче, типнĕ курăка вут хыпса илнĕ 108 тĕслĕхе регистрациленĕ. «Тĕрĕссипе, вĕсен шучĕ тата пысăкрах, мĕншĕн тесен хăшне-пĕрне çынсем пушарнăйсене чĕнсе илмесĕрех «лăплантараççĕ», теприсем вара юхан шыв, сухаланă хир е ытти чăрмав патне çитсен хăйсемех сӳнеççĕ», – пĕлтерет республикăри ГКЧС. Ведомствăра каланă тăрăх – асăннă пăтăрмахсенчен ытларахăшĕ Куславкка тăрăхĕнче /16 тĕслĕх/, Çĕнĕ Шупашкар хулинче /14/, Шупашкар /11/, Çĕрпӳ /10/ тата Сĕнтĕрвăрри /7/ районĕсенче пулнă. Çапах чи хăрушши – типнĕ курăка çунтарнă чухне вут пурăнмалли çуртсем тата хуçалăх объекчĕсем çине куçни, вĕсене кĕл-кăмрăка çаврăрма, этеме шар кăтартма пултарни. Иртнĕ канмалли кунсенчех акă Куславкка районĕнче вут-çулăм пурăнмалли çурт çине «сиксе ӳкнĕ», Хĕрлĕ Чутай районĕнче çакна пула мунча çунса кайнă. Пăрачкав районĕнче вара «хĕрлĕ автан» икĕ çурта кĕллентернĕ. Юрать-ха, вĕсенче никам та пурăнман. «Çĕр лаптăкĕн хуçи типнĕ курăка çунтарма тытăннă та хăйĕн ĕçĕсемпе пăраннă. Çулăм пураласа тунă çуртсем çине куçнă. Арçын икĕ пӳрте вут ярса илсен тин çăлав службине шăнкăравланă», – пĕлтерчĕç Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕнче.**

**Çапла, çанталăк ăшăтма пуçласан пурте тенĕ пекех хăйĕн садпахчине, дача лаптăкне тасатма-тирпейлеме тăрăшать. Чылайăшĕ çӳпçапа çĕр айне чавса чикмест, çунтарма васкать. «Ăпăр-тапăра çунтарасах тетĕр пулсан ку ĕçе çилсĕр çанталăкра тăвăр. Кăвайт валли çуртсемпе йывăççенчен инçерех вырăна суйлăр – вĕсен хушшинче 50 метртан кая мар пулмалла. 25-30 метр радиуслă территорие типнĕ туратсенчен, хăвăрт çунакан ытти япаларан тасатăр. Кăвайта сăнасах тăрăр, хăвăр ăçта та пулин кайнă чухне ун çине тăпра е шыв сапăр. Кĕл-кăмрăка çуртсен çывăхне ан пăрахăр», – сĕнеççĕ специалистсем. Аса илтеретпĕр: пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине пăхăнманшăн граждансене 1-1,5 пин, должноçри çынсене – 6-15 пин, юридици сăпачĕсене 150-200 пин тенкĕ административлă штраф пама пултараççĕ.**

**Çăлавçăсем вăрман пушарĕ алхасма пуçланăшăн ытларах чухне этем айăплине палăртаççĕ. Сигарета сӳнтермесĕрех пăрахни, çунакан шăрпăк пĕрчине айккинелле ывăтни, кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте кăвайт чĕртни – çаксем йăлтах пысăк инкек патне илсе çитерме пултараççĕ. Прогноз тăрăх – федерацин Атăлçи округĕнче кăçал çу-çĕртме уйăхĕсенчех вут-çулăм алхасасси ӳсес хăрушлăх пур. Çанталăк типĕ тăни ăна пушшех пысăклатать. Чăн та, пирĕн республикăра юлашки виçĕ çулта Вăрман пушарĕн службин никĕсне çирĕплетмешкĕн пысăк ĕç пурнăçланă, 100 млн тенкĕлĕх çĕнĕ техника туяннă. Вăрмансене хуралламалли 203 маршрут çирĕплетнĕ, 64 ирĕклĕ пушар дружини йĕркеленĕ, 65 ертӳçе вĕрентсе хатĕрленĕ. Паянхи кун 950 техника синкерпе кĕрешме хатĕр. Çапах ку уйрăм çынсем хăйсене килпетсĕр тытмаллине пĕлтермест. Çут çанталăк инкекĕсем тухнин тĕп сăлтавĕ этем факторĕ пулнине çӳлерех палăртрăмăр ĕнтĕ. Эппин, тимлĕрех тата асăрхануллăрах пулар, вăрман пушарне алхасма парар мар.**

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

## «Хыпар», «Çамрăксен хаçачĕ»: электрон çырăнтару



*2014 çулăн II çурри валли* **«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»** *электрон мелпе çырăнса илме пулать. Çур çуллăх хак:*
**«Хыпар» – 90 тенкĕ,**
**«Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.**
Тĕплĕнрех – www.hypar.ru сайтра

### СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ "Издательский дом "Хыпар" предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

**Çанталăк çинчен**

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк, вырăнвырăн çумăр çăвать. Çил çурçĕрхĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 5 градус ăшă, çĕрле 0 градус.** Атмосфера пусăмĕ 746 мм, сывлăшри нӳрĕк 74 процент.

**Кун тăршшĕ 14 сехет те 57 минут.**

*Сыхлав*

# Явап тыттарманран браконьерсем иртĕхеççĕ

***«Хыпар» ыйтăвĕсене федерацин пулă тытас енĕпе ĕçлекен агентствин Вăтам Атăл территори управленийĕн Чăваш Енри шыв-шурти биологи пуянлăхне тĕрĕслекен, хӳтĕлекен пайĕн ертӳçи Валерий ГРИГОРЬЕВ хуравлать.***



– Хальхи вăхăтра шыв-шурта вăлча сапмалли тапхăр пырать, – терĕ Валерий Петрович. – Атăл тăрăхĕнчи регионсен пулă пуянлăхне упрас, амалăха ирĕккĕн вăлча сапма ытларах май тăвас тĕллевпе Атăл-Каспи шыв бассейнĕнче пулă тытмалли йĕркепе килĕшӳллĕн ака,10 – çĕртме, 10-мĕшĕсенче çут айăка ăманпа илĕртекен кирек хăш çыншăн тата пулă тытма ăста спортсменшăн вăлтапа йĕпе сахаллатнă. Кашнин аллинче пĕр вăлтаран, хĕлĕхре икĕ йĕпрен ытла пулмалла мар.

**– Саккуна икĕ вăлта, кашни карăмри пĕр йĕп тивĕçтерет-и?**

– Çук. Çав хушăра çыран хĕрринчен /кимĕрен юрамасть/ вăлча сапман вырăна пĕр вăлта çеç ямалла. Унпа хăмăшлăха, хăвалăха, ăшăх тĕле ан та пырăр. Пай инспекторĕсем вăлча сапакан шыв хĕрринче ларнăшăн та протокол çыраççĕ. Сĕрекепе, тетелпе, шакпа, марата-сĕкепе, атмапа, аххапа, пулă тытмалли ытти хатĕрпе усă ан курăр. Çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнчен вăлтасенчи йĕпе вунна çитерме пултаратăр. Республикăри пулă йышне упраса хăварас тĕллевпе ака,15 – çĕртме, 15-мĕшĕсенче Сăрпа Атăлта, Шупашкарпа Куйбышев управĕсенче, шыв лаптăкне тара илнĕ, промышленноç мелĕпе пулă тытакан предприятисене тетелпе, сĕрекепе, пулă тытмалли ытти хатĕрпе тытма чартăмăр.

**– Йĕркене пăхăнаççĕ-и?**

– Нумайăшĕ пăсмасть. Анчах браконьер та сахал мар. Инспекторсем ака уйăхĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса административлă кодекса пăхăнман пирки 4 протокол çырчĕç ĕнтĕ. Эпир кăçал пуçарнă административлă 7 ĕçрен 6-шĕ тĕлĕшпе дознани органĕ уголовлă ĕç пуçарнă, следстви пырать. Кăçалхи тăватă уйăхра 373 çын тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарса 945 пин тенкĕлĕх штраф пама, биопуянлăха тăкак кӳнĕшĕн вĕсенчен 26 пин тенкĕ шыраса илсе патшалăха пама йышăнтăмăр, 400 килограма яхăн пулă, саккунпа килĕшсе тăман ăна тытмалли 880 хатĕр, 7 транспорт туртса илтĕмĕр.

**– Йĕркен хăш пунктне ытларах катертеççĕ?**

– Пулă тытма юранă е юраман шывра ăна тытма ирĕк паман меслетпе усă кураççĕ. Сăмахран, Куйбышев управĕнче, Шупашкар ГЭСĕнчен 4 çухрăм аяларах, Шупашкар управĕнче, гидроузелтан 500 метр çӳлерех, çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те, кирек хăш меслетпе те тытма юрамасть.

**– «Хыпарăн» 2013 çулхи кăрлач уйăхĕнчи пĕр кăларăмĕнче пăрпа витĕннĕ Сăрта кислород сахалланнăран пулă унăн юпписенче – Ункăра, Вылара, Хура шывра, Пьянăра – капланнине, çуркунне вăлча сапмасăрах вăлтана пинĕ-пинĕпе çакланнине пĕлтернĕччĕ. Ака-çу уйăхĕсенче вăлчалăх йăх тăсаймасăрах нумай пĕтрĕ-ши?**

– Çулталăк пуçламăшĕнче Сăр пулли кислород çитменрен аптрамарĕ, юхан шыв юпписенче пуçтарăнмарĕ. Ăна пĕлтĕрхи, виçĕм çулхи пек сăтăр кӳмерĕç.

**– Ял çыннисем вырăнти шыв-шурта пулă начар ĕрченĕшĕн кулянаççĕ. Вăл ытларах пултăр тесе хăш тытăмăн тăрăшмалла?**

– Шыв-шур харпăрлăхçисен. Хальхи вăхăтра пысăкрах пайĕн хуçи – ял е хула тăрăхĕн администрацийĕ. Пулă ĕрчетме уйрăм çынна е предприятие тара памалли йĕрке уçăмлă мар пирки ĕç пĕр вырăнтах тăрать. Темиçе районти ял администрацийĕсем пуçарнипе хăшĕ-пĕри тара илнĕ. Анчах ку вăйра тăракан саккунпа килĕшӳллĕ мар.

**– Ялсенче пулла тетелпе, сĕрекепе хуптĕрлеççĕ. Йăмпăлтака ăманпа илĕртсе йăпанакан ветерансен камран пулăшу ыйтмалла?**

– Ял администрацийĕнчен. Пуçлăхăн полици пайне çийĕнчех шăнкăравласа йĕркене пăснине пĕлтермелле. Унтан пырса протокол çырчăр. Полици пайĕн ăна пирĕн пата çитермелле. Кăçал пĕр протокол та ярса паман. Явап тыттарманран браконьерсем иртĕхеççĕ. Пирĕн çичĕ инспектор Сăрпа Атăл çинче вĕсемпе куллен кĕрешет. Районсенчи шыв-шур пуянлăхне картран тухакансенчен хӳтĕлеме вăй çитерейместпĕр. Çавăнпа ĕçе ял администрацине, полици пайне явăçтармалла. Пире административлă йышăну кăларма протоколсем кирлĕ.

**– Пĕлтĕр «Юрма» агрофирмăн тислĕк пуçтармалли лаптăкĕнчен шĕвĕ каяш Шупашкар районĕнчи Йăршу юхан шывне лекнĕрен пулă нумай вилнĕ. Раççей биоресурсне пысăк тăкак кӳнĕшĕн ăна административлă майпа айăпларĕç – 150 пин тенкĕлĕх штрафларĕç. Кунсăр пуçне предприяти тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе кĕçех судра пăхĕç. Вăл çĕр-шыв пуянлăхне текех сиен кӳмессе шанатăр-и?**

– Шанас килмест. Иртнĕ çул, пĕрремĕш инкек хыççăн, вăхăт нумай та иртмерĕ – тислĕк вырăнĕнчен каяш иккĕмĕш хут юхса Йăршăва лекрĕ. Кăçалхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче каллех вырăна çитсе тĕрĕслерĕмĕр, шĕвĕ каяш тислĕк путăкĕнчен юхан шыв еннелле юхнине документпа çирĕплетрĕмĕр.

**– Сире юхан шывсен хĕрринче çӳренĕ чух пуринчен ытла мĕн пăшăрхантарать?**

– Пулăçсем унта йăлари хытă каяш хăварни. Киле таврăннă чух ăна пĕрле илсе контейнера пăрахма йывăр-ши?

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

# Чăваш Ен чикĕ леш енчисене те илĕртет

***Хăть глобуса, хăть карттăна пăх – Раççей территорийĕ мăнаçлăн курăнать! Çапла-и? Чăнах та, пĕтĕм тĕнчери сухалакан çĕрсен 10 проценчĕ шăпах пирĕн çĕр-шывра вырнаçнă. Анчах ура айĕнчи пурлăха шута хуманни унта та, кунта тĕл пулкалать. Çав вăхăтрах вара чикĕ леш енчи çынсен хушшинче çĕр çинче ĕçлес шухăшли сахал мар. Вĕсем лаптăка арендăна илсех ял хуçалăх продукцийĕ çитĕнтерме хатĕр.***

### *Йĕркене шелсĕр пăсса усă кураççĕ*

Пусарсах калам: чăнах та, продукци туса илме вăйне шеллемеççĕ. Анчах çĕр пулăхлăхне упраса хăварассишĕн çине тăни пачах та палăрмасть. Хăвăн япалупа перекетлĕ те типтерлĕ усă куран, паллах. Кунта вара сăмах – арендăна илнĕ çĕр пирки. Ют çĕр-аннемĕре шеллесси пуçра та çук ĕнтĕ унăн. Ара, инçе каяр мар, тара илсе пурăнакан хваттере майласа-пăхса тăни ăçта пулнă вăл?

Йăлари хытă каяшсене пăрахни – çивĕч ыйтусенчен пĕри. Пулăхлă тăпрана полиэтилен пленкăпа хутăштараççĕ, Раççей Федерацийĕнче регистрацилемен пестицидсемпе усă кураççĕ. Çитменнине – йĕркене пăсса. Кунашкал ĕçхĕл хыççăн çĕр пахалăхне тавăрма нумай тăкакланма тивет. Лаптăксем, чăнах та, нумайлăха пусă çаврăнăшĕнчен тухаççĕ. Чи хăрушши вара – яланлăхах юрăхсăрланни.

Çĕр саккунĕсене пăснин çакнашкал тĕслĕхĕсене пулăхлă сие тĕп туни, çĕре пестицидсемпе тата агрохимикатсемпе е çын сывлăхĕшĕн хăрушă ытти япалапа усă курнипе сиенлетни, ял хуçалăх продукцине туса илмешкĕн юрăхсăрлатни тесе хаклаççĕ.

2013 çулта ют çĕр-шыв çыннисен арендинче шутланакан 347 лаптăка /15,4 пин гектар/ тĕрĕсленĕ. 2012 çулта та ку енпе сахал мар ĕçленĕ – 292 лаптăка тĕпченĕ. Пĕлтĕр 5,5 пин гектар çинче йĕркене пăснă 373 тĕслĕхе çиеле кăларнă. Çакă 2012 çулхинчен 4,4 пин гектар нумайрах.

### *Пирĕн патăмăрта сад чĕртесшĕн*

Тăван республикăмăрта ку енпе лару-тăру мĕнле-ши? Иртнĕ çул Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕ Ирина Краснова ют çĕр-шывăн 2 гражданинĕн ĕç-хĕлĕпе кăсăкланнă.

Чехи гражданинĕ Чăваш Енре 0,05 гектар çинче сад чĕртме тĕллев лартнă. Вăл Çĕр саккунĕсене пăхăнса тăрмашнине палăртать патшалăх аслă инспекторĕ. Украина çынни сад-пахча ĕçĕпе аппаланма ирĕк илнĕ. 0,03 гектара вăл ял хуçалăх продукцине туса илме усă курнă. Асăрхаттарусем валли кунта та сăлтав тупăнман.

Сăмах май, Росреестрăн республикăри управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – урăх çĕртен килнисем усă куракан лаптăксен шучĕ 35 çитнĕ. Аса илтерем: кунта чи малтанах ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсем пирки сăмах пырать. Пĕр ют çĕр-шыв çынни – 6 лаптăк хуçи. Унăн 24,654 гектар çинче çĕр улми управĕ тума, лаша тата хур витисем çĕклеме ирĕк пур. 13 гражданин пĕрлехи пай çĕрĕсем çинче ял хуçалăх продукцийĕ туса илме пултарать. 6 çын 7 лаптăкра /0,311 гектар/ сад чĕртессине пĕлтернĕ. Тепĕр ултăшĕ вара хушма хуçалăх аталантарасшăн иккен. Ял хуçалăх производствине вăй илтермешкĕн те ют çĕр-шывăн пĕр çынни 2,1 гектар йышăннă.

Вĕсем мĕнле ĕçленине инспекторсем сăнасах тăрĕç. Çавăнпа та ку тема патне тепĕр хут та таврăнăпăр-ха. Хальлĕхе вара, ютран килнисем чăваш çĕрне шелсĕр усă кураççĕ теме сăлтав çукрах.

■ **Надежда ВАСИЛЬЕВА, управлени ĕçченĕ**

*Ял хуçалăхĕ*

# Республика лайăххисен шутĕнче

***Ака уйăхĕнче çĕр-шывăн чылай субъектĕнче гранта тивĕçессишĕн конкурса хутшăнакансене – ĕçе тытăнакан фермерсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен çемьесене – суйласа илме тытăннă.***

Раççей Ял хуçалăх министерстви патшалăх пулăшăвĕпе чи тухăçлă ĕçлекен регионсене палăртнă. Вĕсем: Çурçĕр Осети-Алани, Тутар, Чăваш республикисем, Ленинград, Вологда, Сахалин, Калуга облаçĕсем тата Алтай крайĕ. Çак субъектсенчи çĕнтерӳçĕсем çу-çĕртме уйăхĕсенче хăйсене тивĕçекен субсидие илĕç. Çав вăхăтрах Волгоград, Свердловск облаçĕсемпе Камчатка крайĕнче ку ĕçе тытăнман та.

ЧР Ял хуçалăх министерстви ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче «Çемье выльăх-чĕрлĕх фермисем» программăпа конкурса килнĕ ĕçсене пĕтĕмлетме тытăннă. Комиссие Сергей Павлов министр ертсе пырать.

Конкурса кăçал документсен 32 пакетне /2013 çулхинчен 9 ытларах/ илсе пынă. Комисси членĕсем Пăрачкав, Патăрьел, Улатăр, Комсомольски районĕсенчи выльăх-чĕрлĕх фермин пуçлăхĕсемпе калаçу ирттернĕ, 9 бизнес проекта тĕплĕн тишкернĕ.

2012-2013 çулсенче патшалăх 10 çемьене пулăшнă. 2014 çул валли федераци бюджетĕнчен 16,5 млн тенкĕ уйăрнă, республикăран – 11,9. Сергей Павлов каланă тăрăх – çак суммăпа 6-7 çемье усă курма пултарать.

«Ĕçе тытăнакан ферма» программăпа конкурс çĕнтерӳçисене комисси паянтан палăртма тытăнать. Кăçал 156 бизнес проект /2013 çулхинчен 42 нумайрах/ хатĕрленĕ.

### *«Рассветра» – кăвак çутла*

Хуçалăх тенкĕ çумне тенкĕ хушса аталанасси çур аки пахалăхĕпе те тачă çыхăннă. Йĕпреç районĕнчи «Рассвет» АУО ĕçченĕсем çакна тахçанах лайăх ăнланса илнĕ. Хĕрӳ тапхăрта ир тăма хăнăхнă, çавна май кун çутипе туллинрех усă кураççĕ, ĕç калăпăшĕ те ӳсет. Хуçалăха «Рассвет» ят пани ăнсăртран мар ĕнтĕ.

Механизаторсем 300 гектар çинче кĕрхисене апатлантарнă, 178 гектар çинче кĕрхисене сӳреленĕ, 25 тонна вăрлăха им-çамланă. Михаил Прокопьевпа Валерий Арланов урпапа сĕлĕ акаççĕ.

Уй-хир ĕçĕ епле пынипе район ертӳлĕхĕ çеç мар, АПК ветеранĕсен канашĕ те кулленех кăсăкланать.

Çуркуннехи ĕççи вăхăтне ылтăнпа танлаштарса механизаторсене уйра вĕри апат 2 хут çитереççĕ.

### *«Герой» тĕслĕхĕпе хавхаланса*

Муркаш районĕнче хире иртнĕ эрнере чи малтан «Герой» ЯХПК хресченĕсем тухнă. Вĕсен тĕслĕхĕпе хавхаланса шăмат кун – «Путь Ильича» агрофирма» ООО, хальтерех Ильич ячĕллĕ ЯХПК та çурхи ĕçе кӳлĕнчĕç. Ана çине пĕрремĕш Михаил Киселев тухрĕ. Вăл 40 çул ытла трактор çӳретнĕ. Унăн алли яланах çăмăл пулаканччĕ.

Савăнăçлă лару-тăрура Уйкас Янасал настоятелĕ Иван атте кĕл тунă, ял çыннисене тухăçлă тыр-пул çитĕнтерме ырă суннă, уй-хире, техникăна сăвапланă.

■ **В.ВАЛЕНТИНОВ**

*Лару*

# Хамăрăнне туянмаççĕ, тулашран кӳреççĕ

***Шупашкарта республикăн Экономика министерствин коллегийĕн, потребительсен рынокĕн ыйтăвĕсене тишкерекен канашĕн пĕрлехи ларăвĕ иртрĕ.***



Унта хутшăннисем ял хуçалăх продукцине тирпейлекен, апат-çимĕç хатĕрлекен предприятисем тата федераци шайĕнчи суту-илӳ организацийĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлессине, йĕркене пăсса эрех сутакансен çулне пӳлессине тĕпчерĕç. Владимир Аврелькин министр «çĕр-шывĕпех сутă тăвакан гипермаркетсен республикăри уйрăмĕсем вырăнти тавара ытларах сутсан ЧР социаллă пурнăçĕпе экономикине, уйрăммăн илсен продукци туса илекенсен, апат-çимĕç хатĕрлекенсен отрасльне аталантарассишĕн пысăк ĕç тăвĕччĕç» терĕ.

Министерствăн яваплă çыннисем икĕ енлĕ çыхăнăва йĕркелес тĕллевпе федераци суту-илĕвĕн пысăк организацийĕсенчен пĕринпе – акционерсен «Магнит» хупă обществин Чăваш Енри ертӳлĕхĕпе – тĕл пулса калаçнă, федералсем валли X5 RETAIL GROUP сетьпе пĕрле вырăнтан тавар туяннă. Ку – пĕрремĕш утăм çеç. Пурте пĕлекен «Пятерочка» регионтисенчен туянма тăрăшнине асăнчĕç. Çапах та вырăнтисенчен килмен сăлтава пула гипермаркет пирĕн организацисемпе килĕшӳ çирĕплетмен тĕслĕх пĕрре çеç мар.

Мăн лавккасем продукцин ытларах пайне çав-çавах тулашран турттараççĕ /шел, унăн калăпăшне тĕрĕс кăтартакан статистика çук/. Çулталăкра темиçе миллиард тенкĕлĕх тавар, вăл шутра пахча çимĕç, аш-какай, çурма фабрикат, ыттине сутаççĕ. Вĕсемпе республика та тивĕçтерме пултарать-çке! Анчах пирĕнне туянмаççĕ. Сăлтавĕ Чăваш Ен таварĕн пахалăхĕ начарринче мар – монополи политикинче.

Акционерсен «Тандер» хупă обществи вырăнти 24 организацирен продукци туянма килĕшӳ çирĕплетнĕ. Тавара мĕнле хакпа йышăнасси пирки калаçса татăлайманнине пула фермерсен 4 хуçалăхĕпе çыхăну йĕркелемен. Общество пахча çимĕçе ытти регионтинчен йӳнĕрех хакпа туянасшăн. «Тандер» лартакан хакпа пирĕн хресченсем килĕшмеççĕ – тĕрĕс тăваççĕ. Экономика министерстви ку ыйтупа ял ĕçченĕсене хӳтĕлет.

Тулашран кӳнĕ, хамăр патра туса кăларнă социаллă пĕлтерĕшлĕ таварăн сутлăх хакĕ пĕрешкел шайра пулмалла терĕç сăмах калакансем. Министр гипермаркетсен тавар çаврăнăшне хамăр продукцие ытларах кĕртес тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе малалла тăсма ыйтрĕ.

Хăш-пĕр тавартан, сăмахран, шурă эрехрен тытакан акцизран укçа хыснана кăçалхи виçĕ уйăхра пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен сахалрах кĕнĕ. Сăлтавне производство калăпăшĕ чакнипе тата тавар сахалрах кайнипе ăнлантарчĕç. Шурă эрех хакланнăран нумайăшĕ килте юхтаракан сăмакун е фанфурик ĕçет. Чăваш Ене федераци маркине тивĕçтермен алкоголь продукцийĕ кӳрсе сутнине сивлерĕç. Суя эрех ярăнтарнăшăн явап тыттарма пултараççĕ.

Ларура республикăн патшалăх тата муниципалитетсен программисене хатĕрлессипе, пурнăça кĕртессипе çыхăннă ыйтăва та сӳтсе яврĕç. Иртнĕ çулсенче вĕсем нумайччĕ. Кăçалтан чылайăшне пĕрлештерсе йышне чакараççĕ. Республикăн – 15, муниципалитетсен 340 программа пулĕ.

«Халĕччен чылайăшне пурнăçа кĕртме укçа хыснара кирлĕ чухлĕ уйăрма пăхман, – терĕ министр çумĕ Екатерина Кузьмина. – Кăçалтан муниципалитетсен программăна кĕртекен кашни ĕçе укçапа çирĕплетмелле».

Министерствăн пай ертӳçи Гюльнара Разумова нумай тĕллевлĕ центрсем кӳнĕ пулăшу ĕçне тишкерчĕ. Ăна кăçалхи пĕрремĕш кварталта пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен ытларах пурнăçланă.

■ **Сергей ВАСИЛЬЕВ**

# «Транскрим» вăрăсене хирĕç



***Талăксерен 250 ытла сотрудника явăçтарса Чăваш Ен полицийĕ республика территорийĕнче «Транскрим» оперативлă профилактика мероприятине ирттернĕ. Саккунсăр автобизнеспа ĕçлекен ушкăнсемпе çынсене, вăрланă транспорт хатĕрĕсене тупса палăртас тĕллеве тĕпе хунă.***

Виçĕ кунра полици автотранспорт управĕн 800 яхăн вырăнне /гараж кооперативĕсем, автостоянкăсем, мастерскойсем, пасарсем тата ыт.те/ тĕрĕсленĕ. Операци вăхăтĕнче шыраври 8 автомобиле тупнă. Çав шутра – 4 БМВ, «Тойота», «Ауди», «Мазда» тата ВАЗ. Номер агрегачĕсене улăштарнă икĕ автомобиле тытса чарнă, машина вăрланипе çыхăннă 4 преступление уçса панă.

Тĕслĕхрен, «Ауди-Q5» иномарка тĕп хулари регистраци пунктĕнче иккĕленӳ çуратнă. Шупашкар çынни ăна регистрацилеме пынă. Автомобиле уйрăм çынран Мускавра миллион тенкĕ ытла тӳлесе туяннă. Анчах машина докуменчĕсем суя иккен, «Ауди» Мускавра шыравра шутланать. Хаклă иномаркăна арестленĕ, ĕç-пуçа тĕпчеççĕ.

**К.ПЕТРОВ.**

*Чăвашстат хыпарлать*

# Республикăри халăх йышĕ




*Пĕтĕмлетӳ*

# Ултава – тăрă шыв çине

***Прокурорсен 2014 çулхи пĕрремĕш кварталти тĕрĕслевĕсем патшалăх тата муниципалитет служби, коррупципе кĕрешесси çинчен калакан саккунсене пăснин 617 тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларма май панă.***

Çитменлĕхсене пĕтерес тĕллевпе 172 представлени çырнă, вĕсене тишкернĕ май дисциплина енĕпе должноçри 88 çынна явап тыттарнă. Саккунсăр право акчĕсем тĕлĕшпе 211 протест тăратнă, прокурорсен йышăнăвĕпе 13 çынна административлă майпа явап тыттарнă, суда 17 ыйту панă. 6 материала следстви органĕсене ăсатнă май вĕсем тăрăх уголовлă 8 ĕç пуçарнă.

Патшалăх тата муниципалитет служби çинчен калакан саккунсенче коррупцирен сыхланса çирĕплетнĕ чарусемпе тивĕçсене пăснă тĕслĕх – 154. Вĕсенчен чылайăшĕ тупăш тата пурлăх тĕлĕшпе тĕрĕс мар кăтартусем панипе çыхăннă. Ытти «йăнăш» та тĕл пулать.

Çĕрпӳ районĕн прокурорĕ вырăнти депутатсен пухăвĕн муниципалитетăн çул-йĕр фончĕ çинчен калакан йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ, çав фонд укçипе усă курмалли йĕркене протестленĕ. Унта коррупцие сăлтавлама пултаракан самантсене асăрханă: документра бюджет ассигнованийĕсен калăпăшне, вĕсемпе усă курмалли йĕркене çирĕплетекен, укçапа тĕллевлĕ усă курнине тĕрĕслесе тăмалли административлă процедурăсене палăртман.

Саккассене вырнаçтарассине йĕркелекен саккунсене пăснин 32 тĕслĕхне тăрă шыв çине кăларнă. Вĕсем тĕлĕшпе протестсемпе представленисем çырнă, 12 çынна – дисциплина енĕпе, 4 çынна административлă майпа явап тыттарнă, уголовлă пĕр ĕç пуçарнă.

Патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе усă курассинче те çитменлĕхсем пур. Унашкаллине Комсомольски районĕн прокурорĕ тупса палăртнă. «Патшалăх сорт комиссийĕ» ФПУн вырăнти филиалĕ хресчен-фермер хуçалăхне 1048 гектар çĕре ял хуçалăх продукцийĕ туса илме панă. Ку тĕслĕхпе административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕç пуçарнă, айăплине 2000 тенкĕлĕх штрафланă.

Асăннă сферăра пĕрремĕш кварталта уголовлă 8 ĕç пуçарнă. Калинин районĕн прокуратурин материалĕсем тăрăх ШĔМĕн Шупашкарти управленийĕ Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн директорĕ тĕлĕшпе УК 160 статйин 3-мĕш пайĕпе уголовлă ĕç пуçарнă, ăна музейĕн 285 пин тенкине хăйĕн кĕсйине чикнĕшĕн айăпланă.

■ **Валерий МИХАЙЛОВ, ЧР прокуратурин коррупципе кĕрешесси çинчен калакан саккунсене пурнăçланине сăнаса тăракан пайĕн прокурорĕ**

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче 2014 çулхи çу уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе йышăнмалли кунсем**
**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/**

| | | |
|---|---|---|
| 6 | Ю.А.Попов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ |
| 7 | А.П.Князев | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Бюджет, финанс тата налуксем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| 13 | О.В.Мешков | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Экономика политики, агропромышленноç комплексĕ тата экологи енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| 8 | П.С.Краснов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |
| 15 | Н.В.Малов | Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Патшалăх строительстви, вырăнти хăй тытăмлăх, Регламент тата депутат этики енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ |

Çынсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн йышăну пӳлĕмĕнче çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 10 çурт, 3 пӳлĕм.

10 сехетрен пуçласа 17 сехетчен йышăнаççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-67.

*Чăваш наци радиовĕ: 5 çул*

# Ир те, каç та янăрать

Чăваш наци радиовĕ 5 çул каялла Аслă Патриархăмăр Иван Яковлев çуралнă кун, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче, пĕрремĕш хут янăраса кайрĕ. Паян вăл 105 FM тата 72.41 УКВ хумсем çинче, Интернетра ntrk21.ru адреспа талăкĕпех калаçать. Эфирăн пĕр пайне юрă-кĕвĕ, тепĕр пайне информаципе аналитика, обществăпа политика, литературăпа драма, ăслăлăхпа вĕрентӳ, ача-пăча, вăйă-кулă кăларăмĕсем йышăнаççĕ. «Каннă чухне те, ĕçленĕ чухне те – Чăваш наци радиовĕ». Ку эпир шухăшласа кăларнă хитре каларăш мар. Чăннипех çапла. Паян тĕрлĕ сăлтавпа наци радионе итлеймен çемье хăйне чăваш тĕнчинчен уйăрнă пек, тымарне касса янă пек туять.

Малта пулмашкăн тăрăшса ĕçлемелле. Çавăнпа юлашки çулсенче кăларăмсен политикине урăхларах куçпа пăхса хак пама тиврĕ. Эфир тытăмне пач улăштартăмăр. Паллах, халăх хăнăхнă вăхăтра юратса итлекен кăларăмсене тĕкĕнмерĕмĕр. Çĕнĕ хыпарсен вăхăчĕсене куçартăмăр. Халĕ вĕсем сехетсерен эфира тухаççĕ. Çапла майпа хăвăртлăх тата та ӳсрĕ. Эпир паян республикăра, çĕр-шывра, тĕнчере мĕн пулса иртнине çийĕнчех, вăхăта сая ямасăр каласа паратпăр. Вырăнтан тӳрĕ эфира тухма пултаратпăр.

Специалистсене конкурс ирттерсе шырани радиона ĕçчен те пултаруллă, ăслă та пуçаруллă çынсене ĕçе илме май пачĕ. Çавна пулах эфир жанр тĕлĕшĕпе те, стилистикипе те уйрăлса тăракан передачăсемпе пуянланчĕ. Хăйне евĕрлĕ кăларăмсем кун çути курчĕç: «Юрату авăрĕнче», «Пултарулăх çулĕпе», «Ӳнер тӳпинчи вĕçев», «Чĕнтĕрлĕ чаршав», «Шурăмпуç», «Янра юрă», «Присягая Родине», «Ачалăх урхамахĕ», «Уйăхпи юмахĕсем», «Çемье ăшши», «Пĕччен мар».

Пирĕн радио талăкĕпех калаçать. Эфира 24 сехетлĕх хатĕрлесси çăмăл мар. «Наци радиовĕ» тетпĕр пулсан çак чыса тӳрре кăлармаллах. Радиокалавсем, радиоочерксем, радиоспектакльсем хатĕрлетпĕр. Тĕрлĕлĕх эфира илĕртӳллĕрех тăвать. Наци радиовĕ çĕклекен ыйтусем Чăваш Енпе, республикăра пурăнакансемпе тата йăхташăмăрсемпе çыхăннă. Чи пĕлтерĕшли – хамăр çинчен ытларах лайăххине каласа парасси. Пирĕн истори, литература, театр, искусство, йăла-йĕрке пуян, чаплă çын нумай.

Республика пурнăçне пур енлĕ çутатма тăрăшатпăр: экономика, культура, ăслăлăх, вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, ял хуçалăх, спорт ыйтăвĕсемпе хатĕрленĕ кăларăмсем кунсерен тухса тăраççĕ. Социаллă ыйтусене çĕклекен передача нумай. Паянхи радио – чи малтанах интерактивлă хутшăну. Передачăсен çуррийĕ тӳрĕ эфирта иртет. Çакă итлекенсемпе çывăх хутшăнма май парать. Вĕсем кăларăмсенче çĕклекен ыйтусене хастар сӳтсе яваççĕ, хăйсен шухăшĕсене калаççĕ, сĕнӳсем параççĕ. Шăнкăравсемпе СМС-хыпарсем «Ирхи кăмăл», «Чĕререн тухакан сăмахсем», «Каçхи микс», «7 юрă», «Пачăшкă сăмахĕ», «Социальный вопрос», «Пĕччен мар», «Тĕплĕ калаçу» кăларăмсене çынсем кăмăлласа итленине çирĕплетеççĕ.

Эфир илемĕ – хитре сасăсем! Юлашки вăхăтра çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтне, пурнăç саманчĕсене халалланă хушăмсем тăтăшах янăраççĕ. 10 çеккунта тăсăлакан кĕске хайлавсенче наци радиовĕн чи тутлă сывлăшĕ, ырă шăрши, çутă ĕмĕчĕ, шухăш-тĕллевĕ, ас-хакăлĕ палăрать. Литературăпа кĕвĕ композицийĕсем евĕр йĕркеленĕскерсем кĕске спектакльсем пекех янăраççĕ. Çак илеме хатĕрлеме артистсене те явăçтаратпăр. Светлана Савельевăпа Владимир Григорьев, Алексей Болдыревпа Марина Подъячева, Валерий Карповпа Надежда Зубкова пире пулăшма кăмăл та, вăхăт та тупаççĕ. Халĕ вĕсен сасси яланлăхах наци радиовĕн сасси пулса тăчĕ. Вĕсемпе кун пуçланать, вĕсемпех вĕçленет.

«Радиотеатр», «Çемье ăшши», «Каçхи юмах», «Иксĕлми çăл куçсем», «Рабочая смена», «Столица» – социаллă пĕлтерĕшлĕ проектсем. Паянхи куна грант укçи-тенкипе тĕрлĕ театрта лартнă 50 яхăн спектакль çырса илтĕмĕр. Çапла вара чăваш сцена искусствин еткерĕ ĕмĕрсем валли Наци радиовĕн фонотекинче упранса юлĕ. Кăçал ЧР Информаци политикин министерстви пулăшнипе театрсен репертуарĕнчи 10 спектакле çырса илесшĕн.

Пысăк тепĕр çитĕнĕве палăртса хăварар. Малтан пире Шупашкарта пăралуклă радиопа тата Интернетпа çеç итлеетчĕç. Мускавра «Тăван радио» валли 100,3 хум çĕнсе илни пысăк шанчăк пачĕ. Халĕ Наци радиовĕн чи лайăх передачисем эфира çак хум çинче тухаççĕ.

Чăвашла калаçакан радио уçни – истори пĕлтерĕшлĕ пулăм. Малтанах тăван чĕлхешĕн тунсăхланă çынсем кашни сăмаха, чăваш юррине каçăхса итленĕ. Кунĕпе чăвашла калаçакан радио пурришĕн питĕ савăннă. Ытларахăшне тăван чĕлхе янăрани те çителĕклĕ пек туйăннă. Передачăсен пахалăхне хакласах кайман. Халĕ итлекене ку кăна çырлахтармасть. Вăл тишкерӳллĕ итлет. Лайăххипе япăххине суйлама вĕренет. Пĕлсе мухтать, вăхăтра канаш парать.

Паянхи радио – талпăну. Пĕр вырăнта чарăнса тăма юрамасть. Хамăр сăн-сăпата, наци хăйне евĕрлĕхне упраса хăварнипе пĕрлех пирĕн хамăрăн та улшăнса пымалла. Çĕнĕ жанрсем алла илмелле, çĕнĕ хурăмсем шутласа тупмалла. Радио итлекенсене мĕн кăсăклантарнине пĕлсе тăмалла, кирлех пулсан ăна хăйне те ырă еннелле улăштарма тăрăшмалла.

■ **Олег ПРОКОПЬЕВ, продюсер центрĕн пуçлăхĕ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем









## Пĕрлĕхсене шута илнĕ

Чăваш Республикинче 25 наци культура пĕрлĕхне /çав шутра 8 наци культура автономийĕ/ тата 309 тĕн организацине регистрациленĕ. Кун пирки Раççей Юстици министерствин Чăваш Енри управленийĕн пуçлăхĕ Дмитрий Сержантов Национальноçсен ĕçĕсен канашĕн тата Тĕн пĕрлĕхĕсемпе хутшăнса ĕçлекен канаш ларăвĕнче пĕлтернĕ.

Пĕлтĕр управлени наци культура пĕрлĕхне регистрацилеме ыйтнă ултă завялени пăхса тухнă. Çĕнĕрен икĕ пĕрлĕх йĕркеленĕ. Çавăн пекех иртнĕ çул 96 тĕн организацине регистрацилеме ыйтса çырнине йышăннă. Виççĕшне – вырăс православи чиркĕвĕн, исламăн тата Евангели ĕненĕвĕн христианĕсен пĕрлĕхĕсене – çĕнĕрен туса хунă.

Раççей Юстици министерствин Чăваш Енри управленийĕ наци культура тата тĕн организацийĕсем РФ саккунĕсене пăхăннине те тĕрĕслет. Çавăн пекех йĕркене пăсма пултаракансене асăрхаттарас тĕллевпе семинар-канашлу, тӳрĕ телефон линийĕсем ирттерет, консультаципе тивĕçтерет. Патшалăх регистрацийĕ тата тĕрĕслев йĕрки çинчен управлени специалисчĕсенчен ыйтса пĕлме тата сайтри /http://to21.minjust.ru/ информаципе паллашма пулать.

■ **О.ПЕТРОВ**

*Ас тăвăм*

## Халăх сăмахлăхне пухнă

***Халăх сăмахлăхне пухнă Виктор Семенович Разумов /Виктор Вирьялский/ сăвăç çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. Вăл культура тата вĕрентӳ ĕçĕнче тарăн йĕр хăварнă.***

Виктор Семенович Разумов 1894 çулхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Етĕрне уесне кĕрекен Çуткасси ялĕнче учитель çемйинче çуралнă. Шкултан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан Хусанти учительсем хатĕрлекен чиркӳ шкулне кĕнĕ. Пĕчĕкрен вăл юрра-кĕвве юратнă. Тăван ялĕнчи юрăсене çырса илнĕ. Архивра Чотай юррисем 59 çаврăм, 42 чăваш юрри тата нотисем упранаççĕ.

Виктор Семенович аслă пĕлӳллĕ вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ. Çак шухăш-тĕллев ăна 1916 çулта Хусан хулинчи учительсене хатĕрлекен института илсе çитернĕ. 1918-1922 çулсенче кунта Н.В.Никольский Атăлçи халăхĕсен этнографийĕн курсне вуланă. Вăл этнографипе чăваш сăмахлăхне пухма ятарлă программа тата сăмахлăхăн тĕслĕхĕсене хатĕрленĕ. Халăх юрри-кĕввине пуçтарма вăл студентсене те явăçтарнă.

Çуллахи каникулсенче вĕренекенсем хăйсем пурăнакан тăрăхри халăх сăмахлăхне çырса илнĕ. Тĕрлĕ çĕрте, тĕрлĕ вăхăтра пухнă тĕслĕхсене танлаштарса тĕпчеме хăнăхнă. Çак ĕçе Виктор Разумов кайран та пăрахман. Ăна пурнăç тĕллевĕ вырăнне хунă. 1918 çул тĕлне çак институтран 14 чăваш ачи вĕренсе тухни паллă. Виктор Разумовпа пĕрле Чурпай ялĕнчен килнĕ Павел Айдак /А.Айдакăн ашшĕ/ вĕреннĕ.

1917 çулта Палтай вулăсне кĕрекен хресченсем ăна Хусан кĕпĕрнин хресченсен пĕрремĕш тата виççĕмĕш съездне делегата суйланă. Вăл çавăн пекех – «Хыпар» хаçатăн пуçаруллă та хастар авторĕ. Чăваш хаçатне укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрен эрнере икĕ хут кăларма çăмăлах пулман. Пархатарлă çынсем тăван чĕлхепе хаçат вулассишĕн нухрат хĕрхенмен. В.Разумов студент Çуткасси, Уйкас, Тукас, Яракасси, Кĕçĕн Хăмаркка, Кĕçĕн Чутай, Кĕçĕн Шемертен ялĕсенче халăхран 101 тенкĕ те 62 пус пуçтарни паллă.

Вĕреннĕ вăхăтра ăна мучăшĕ Алексей Петрович Разумов /манаха тухсан ăна Антоний ят панă, архимандрита çитнĕ, Хусан кĕпĕрнинче чăваш арçынĕсен пĕртен-пĕр монастирне йĕркеленĕ, çавăнтах пурăннă/ чылай пулăшнă.

Виктор Семенович 1920-1934 çулсенче республикăри педагогика техникумĕсенче ĕçленĕ. 1920-1925 çулсенче Хĕрлĕ Чутай салинчи педтехникумра чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. 1925 çулта Виктор Семенович çемйипех Канаш хулине куçнă, педтехникумра вĕрентме пуçланă. Студентсене халăх сăмахлăхне пухма явăçтарнă. 12 томран тăракан юрăсен пуххине алăпа çырса хатĕрленĕ. 1927 çулта «Самана» халăх юррисен пуххипе Мускавра халăх хуçалăх çитĕнĕвĕн куравне хутшăннă, Хисеп хутне тивĕçнĕ.

1930 çулта В.Разумов Патăрьелти педтехникума ĕçлеме куçнă. Кĕçех Виктор Семеновича политика енчен шанчăксăр, националист, революцие хирĕç пырать тесе айăпланă. Çĕнĕ ĕç шыраса вăл Çĕмĕрле хулине çитнĕ. Кунта вăл «Дубитель» завод çумĕнчи рабфакра тата ФЗУра вĕрентнĕ.

Сталин репрессийĕнчен Разумовсен çемйинчи арçынсем те çăлăнса юлайман. Виктор Семеновича 1937 çулхи авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче арестлесе Çĕрпӳ тĕрмине ăсатнă. Унпа пĕрлех шăллĕне Никандра, 20 çулти ывăлне Василие арестленĕ. Революцие хирĕç агитаци тунă тесе Виктор Семеновича 8 çуллăха тĕрмене хупнă. Карагандари лагерьте пилĕк çул тертленнĕ. 1942 çулта киле таврăннă. Чирлĕ учитель Çĕмĕрлери вăрман юхтаракан предприятие бухгалтера вырнаçнă.

1946 çулта çеç вăл юратнă ĕçе кӳлĕннĕ. Учительсем çитменрен Виктор Семеновича шкулта ĕçлеме ирĕк панă. Çĕмĕрле хулинчи 1-мĕш шкулта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. 1948 çулта сывлăхĕ хавшаса çитнĕрен библиотекаре ĕçлеме куçнă.

Пурнăçĕ те çăмăл пулман. Йывăç пӳртри пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте тăваттăн пурăннă. 1950 çулта пĕчĕк пенси илсе тăма тытăннă. 1958 çулта РСФСР Аслă сучĕ В.Разумовăн таса ятне таврăрнă. 1965 çулхи чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕнче çут тĕнчерен уйрăлнă.

Гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче Виктор Семенович пуçтарнă 85 том упранать. Тĕпчевçĕсемшĕн вăл питĕ паха материал. Архивра упранакан ĕçсене тишкерекенсем тупăнсах тăраççĕ, унпа усă кураççĕ.

■ **З.ИЗОРКИНА.**

Етĕрне районĕ, Кăкшăм ялĕ

*Юбилей*

# Шăпа пӳрни е турă çырни-ши?

***Пĕр самант çын шăпине татса пани те пулать иккен. Турă çырни темелле-ши ăна? Палăртнă тĕллев патне хăшĕсем ĕмĕр тăршшĕпе утсан та çитеймеççĕ. Халĕ вулавçăсене паллаштаракан çыннăн вара умра унашкал шухăш та пулман, анчах та телейĕ юнашарах çӳренĕ. Тĕрĕссипе, театра юратакансем ăна ман пулăшусăрах пĕлеççĕ-ха. Куравçăсен темиçе ăрăвĕ унăн сăнарĕсемпе киленсе çитĕннĕ.***

***Сăмахăм Раççей, Чăваш халăх артисчĕ, К.С.Станиславский ячĕллĕ РСФСР Патшалăх, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш Ен комсомолĕн премийĕсен лауреачĕ Николай Григорьев çинчен. Ун пирки сăмах тапратма сăлтав пур: Николай Данилович ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче 75 çул тултарать.***



• *Н.Григорьев.*

**– ГИТИСа вĕренме кĕресси сирĕн ăнсăртран, кĕтмен-туман çĕртен пулнă тенине илтнĕччĕ. Тĕрĕсех-и?**

– Чăнах çавăн пек. Эпĕ, Çĕрпӳ районĕнчи Çĕнялта çуралса ӳссе çитĕннĕскер, шкул хыççăн Хусана ветеринара вĕренме каяс тенĕччĕ, анчах пĕр балл çитменнипе института кĕреймерĕм. Вара Шупашкара çул тытрăм, СМУ-4 хăпартакан объектсенче ĕçлеме пуçларăм. Çапла çулталăк иртрĕ.

Утă уйăхĕнчи пĕр кун пире Атăл хĕррине баржа пушатма ячĕç. Кăнтăрлахи апата Колхозник çурчĕ çывăхĕнчи столовăйне антăмăр. Театр вырнаçнă çурт та кунтан инçе марччĕ.

Манпа пĕрле ĕçлекен юлташ /сăмах май, вăл хăй вăхăтĕнче Çамрăксен театрĕнче ĕçленĕ. Шел, эпĕ унăн ятне ас туса юлман, çакăншăн халĕ те ӳкĕнетĕп/ Чăваш театрĕ валли артиста вĕренме илесси пирки пĕлтерчĕ. Эпĕ хăнк та тумарăм-ха. «Атя, санăн унта каймаллах, – тет. – Ыран виççĕмĕш тур».

**– Мĕнле йышăнчĕç вара сире, малтанхи турсене хутшăнманскерсене?**

– Ĕçтешĕм пĕр çын патне пычĕ те: «Эпĕ хитре каччă илсе килтĕм», – терĕ. «Пире каччăсем питĕ кирлĕ», – пулчĕ хурав. Тепĕр кун валли тем те хатĕрлемелле иккен: юптару вуламалла, сăвă каламалла, ташламалла, юрламалла тата ытти те. Пĕлместĕп, мĕн хăтланнă ун чухне, анчах та конкурс вĕçленсен мана вĕренме илнине пĕлтерчĕç. Мускава, ГИТИСа каятăп-çке! Çак хыпарпа килтисене те савăнтарас килет. Ял çумĕпе иртекен пуйăс кайнă, урăх транспорт çук. Питрав кунĕнче 40 çухрăма çуран утса тухрăм.

**– Мĕнлерех йышăнчĕç кĕтмен хыпара аçăрпа аннĕр?**

– Артиста вĕренме каясса пĕлсен анне нимĕн те каламарĕ, пĕр тапхăр шăп тăчĕ, унтан алă сулчĕ те пӳртрен тухса кайрĕ. Ăнланатăп вĕсене, тракториста е агронома тенĕ пулсан кăмăлĕсем çемçелетчĕç ĕнтĕ. Кам вăл артист, мĕн тăваççĕ вĕсем? Çакă канăçсăрлантарнă та тăванăмăрсене.

Тĕлĕнмелле çынсемччĕ вĕсем. Анне кӳршĕ ялтан качча пынă. Пĕрлешсен нумай та пурăнайман, аттене финн вăрçине илсе кайнă, унтан – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине. Анне 21 çулта пĕччен юлнă, эпĕ çуралнă. Атте 1941 çулта Ленинград çывăхĕнче плена лекнĕ. Германиех ăсатнă. 1945 çулта американсем совет салтакĕсене пленран хăтарнă, вăрçă вĕçленнĕ, анчах атте тата ун пеккисем Сталин тĕрмине лекнĕ. Донбасра шахтăра çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Яла 1948 çулта таврăннă. Эпĕ çавăн чухне аттене пуçласа куртăм.

Анне окоп чавнă, вăрман каснă вăхăтра эпĕ асаттепе тата асаннепе пурăннă. Çапла иртнĕ манăн ачалăхăм. Асатте чиркӳпе прихут шкулĕ пĕтернĕ, вулама-çырма пĕлнĕ. Мана пĕрре те вăрçман вăл, çапла тума сăлтав пулсан та. Ăслăччĕ, шăхвăртса калаçатчĕ.

**– Мускав тата чăваш ачи... Мĕнлерех туйрăр хăвăра малтанхи вăхăтра тĕп хулара?**

– Эпир, тислĕк купи ăшĕнчен тухнăскерсем, мĕн курма пултарнă унччен? Пирĕн килте радио та пулман, хăшĕсем пăравус та курман. Пианино пирки сăмах та çук.

Мускав пирĕншĕн юмах пекехчĕ. Вĕрентӳçĕсем Хĕрлĕ площаде илсе кайрĕç. Телей мар-и çакă?

МХАТ – чи чаплă театр. Пирĕн курс ертӳçи, СССР халăх артисчĕ Василий Орлов, çав театрта ĕçленĕ. К.Станиславскин вĕренекенĕ пулнă. Вăл вара пире вĕрентнĕ. Мĕн тери телей! Институтпа юнашарах – Маяковский, Моссовет ячĕллĕ, «Современник», Пысăк, Пĕчĕк театрсем... Вĕсем те илĕртнĕ пире.

Ял ачисемшĕн Мускав тепĕр университет шутланнă.

**– Нина Ильиничнăпа çывăх паллашасси виççĕмĕш курсра «Ромеопа Джульетта» лартма пуçланипе те çыхăнман-и?**

– Çук паллах. Пире педагогсем суйласа илнĕ. Кайран, пиллĕкмĕш курсра асăннă спектакльпе тĕплĕн ĕçлеме пикенсен, пĕр-пĕрин çине урăхларах пăхма пуçланă. Эпир Шупашкарта, Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ĕçлеме тытăнсан, пĕрлешрĕмĕр.

Ун чухне «Ромеопа Джульетта» спектакль те, кино та пулман, хамăрăн ăшра, чунра мĕн пуррине туртса кăларнă. Педагогсем хушнине итлесе, чĕрере пуррине туйса ĕçленĕ. Çавăнпа вĕсем чăвашсене çывăх та. Петĕр Хусанкай куçарăвĕ питĕ хитреччĕ, сăмахсем юхса пыратчĕç.

Тăван театра ĕçлеме таврăнсан та чылай вăхăт килĕштерсе вылярăмăр ăна.

**– Театрта икĕ çул ĕçленĕ хыççăн телекурава куçса кайнине мĕнпе çыхăнтаратăр, сăлтавлатăр? Театр тивĕçтермен е урăх сăлтав тупăннă?**

– Ним калама та пултараймастăп. Шăпа пулĕ. Е çĕнĕ япала илĕртнĕ-ши? Виçĕ çул ĕçлерĕм унта, анчах чун театрах туртрĕ. Таврăнтăм.

**– Çапах та темиçе çултан тата явaплă ĕç шанса панă сире.**

– Çапла çав. Ун чухнехи культура министрĕ Иван Маркелов хăй патне чĕнсе илчĕ те: «Санăн ГИТИСа вĕренме тепĕр хут каймалла,– тет. – Часах Музыкăпа драма театрĕ уйрăлса тухать, Чăваш театрне директор кирлĕ пулать».

**– Кам вăл директор? Эсир хăвăра çак «рольре» мĕнле туйнă?**

– Куравçăшăн вăл – билет тупма пулăшаканĕ, артистсемшĕн – хваттер, преми, ятсум... илме. Унăн тĕп тĕллевĕ – театрăн пур цехне те пĕр тикĕс ĕçлеттересси. Театр директорĕ туянма, сутма... пĕлни çеç çителĕксĕр. Унăн театр ĕçĕнчи специалист та пулмалла. Çакна та шута илнĕ ахăр ун чухнехи ертӳçĕсем.

Çулталăк вĕреннĕ хыççăн театра таврăнтăм, директор тивĕçĕсене пурнăçланипе пĕрлех сцена çине те тухма пăрахман. Пĕрре те çăмăл пулман. Пур енĕпе те. Ирхине ĕçе килен те каçхине спектакль хыççăн çеç пушанатăн. Тата... кампа та пулин хыттăн калаçма тивет, унпах спектакльте юнашар вылятăн. Çапла 20 çул иртсе кайни сисĕнмерĕ те.

**– Сцена çинчи сăнарсем вара... Хăшĕн пирки ытларах чарăнса тăрас килет?**

– Вун-вун, çĕр-çĕр сăнар калăпланă пулсан та кирек камăн та чуна çывăххи 6-7-рен ытла мар. Урăхла пулма та пултараймасть. Пурне те тĕлĕнмелле чаплă тăваймастăн. Ку енĕпе хăвăнтан килмен сăлтавсем те пайтах.

Хама илес тĕк – 4-5-шĕ пирки «чăнах та чăн-чăн ĕç» тенĕ пулăттăм. Володя Ульянов /Н.Терентьев, «Хумсем çырана çапаççĕ»/, Сатин /М.Горький, «Хĕвелсĕр»/, Аким /Л.Толстой, «Тĕттĕмлĕх тытăмĕ»/, Фальстаф /«Ашкăнчăк инкесем»/, Айтар /П.Осипов, «Айтар»/.

**– «Хумсем çырана çапаççĕ» спектакль пирки тĕплĕнрех чарăнса тăрсамăрччĕ.**

– Çул пуçăн 100 çулхи юбилейĕ тĕлне кăларнă ăна. Чăннипех питĕ тĕплĕн хатĕрленĕ. Володя Ульянов пирки тата ытларах вулама тиврĕ. Спектакле йышăнма Мускавран патшалăх комиссийĕ килчĕ. Хăнасем кăмăллă юлчĕç. Премьера 1970 çулхи пуш уйăхĕн 19-мĕшĕнче иртрĕ. Сезон вĕçлениччен тата темиçе хут та аншлаг пуçтарчĕ. Çав çулах Володя Ульянов ролĕшĕн Чăваш Ен комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премине пачĕç, тепĕр çулне вара асăннă спектакле лартнă Л.Родионов режиссер, В.Мазанов художник, В.Родионов, Г.Терентьев тата эпĕ К.С.Станиславский ячĕллĕ РСФСР Патшалăх премийĕн лауреачĕсем пулса тăтăмăр.



• *«Хумсем çырана çапаççĕ» ĕçрен.*

**– Тата сакăр çултан коллектив каллех çул пуç сăнарĕ патне таврăннă. Н.Терентьевăн «Çисĕм хыççăн аслати» хайлавне В.Яковлев лартнă.**

– Кунта революци хыççăнхи тапхăр, 1918 çул. Çĕр-шыв йывăр лару-тăрура. Çапах Ленин чăвашсене çутта кăларнă Иван Яковлев пирки те манмасть, ăна хӳтĕлесе Чĕмпĕре çыру çырать. Хальхинче те Ленин сăнарне мана шанса пачĕç.

**– Кĕтмен-туман çĕртен педагогика ĕçне суйласа илни пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– 60 çул тултартăм. 2000 çулта Шупашкарта культурăпа искусство институчĕ уçăлчĕ. Вăл пулман тăк тивĕçлĕ канăва каяттăм-ши? Калама пултараймастăп, анчах та театрта ĕçлесе çитернине лайăх туйса илтĕм. Институтра кăмăллă йышăнчĕç. Икĕ çул преподавательте ĕçлерĕм, унтан кафедра ертӳçи туса хучĕç.

**– Çапах та Николай Григорьев профессор сцена ĕçĕпе сыв пуллашнă теме май çук – вĕренекенĕсенче артист хĕмне чĕртет. Паянхи артиста мĕн канăçсăрлантарать?**

– Паллах, сцена çине тухса хамăн шухăшăма палăртаймастăп, çакна манăн студентсем тăваççĕ. Çĕнĕ ăру яланах ун умĕнхисенчен уйрăларах тăрать. Паянхи çамрăксем хăюллă, техникăна лайăх пĕлеççĕ, çав вăхăтрах шăпах çакă кансĕрлет те вĕсене: иртен пуçласа çывăрма выртиччен – компьютер умĕнче. Мĕн пулса иртет республикăра, Раççейре, тĕнчере – ун пирки сӳтсе явнине нихăçан та илтмен.

**– Пурнăçра чи хакли мĕн тетĕр?**

– 75 çула çитрĕм. Тем те курнă. Чи пĕлтерĕшли – хăвна, хăвăн ĕçне тупни. Тепри – çемье. Ку енĕпе мана юмахри пек ăннă. Чунĕпе, ăсĕпе сана парăннă, ăнланакан çын пурри – чи хакли. Пĕрле пурăнма пуçланăранпа кăçал 53 çул çитет, урлă-пирлĕ пулман. Мана тем тĕрлĕ те çавăрттарать мăшăрăм, артист вĕт!

**– Ĕçтешĕрсене, артист пулма ĕмĕтленекенсене мĕн сунатăр?**

– Театр ĕçĕ питĕ йывăр. Талантлă пулни çеç çителĕксĕр, лайăх режиссер кирлĕ. Чăвашсемшĕн çакă чăнчăн инкек. Валерий Николаевич ватăлса пырать, унпа юнашар тăма пултаракан çын çук. Шел те, влаçрисене шухăшлаттармасть пулĕ çакă. Театр кĕçех 100 çула çитет. Мĕнле кĕтсе илĕ ăна? Вăл малалла пурăнтăр тесен татăклă йышăнусем, ĕçсем пурнăçламаллах.

Эпир театра ĕçлеме килнĕ вăхăтра театр кĕрлесе тăратчĕ. Камсемччĕ унта: Ургалкин, Родионов, Шорникова... Чăнчăн Ренессанс! Паян ĕçлекенсене те, сцена çине тухма ĕмĕтленекенсене те телейлĕ çак самант асамлăхне туйма сунатăп.



• *«Айтар» спектакльрен. Пинерпи – В.Ситова.*

■ **Надежда СМИРНОВА калаçнă**

